# «Тантăш» – Куславкка районĕнче

## Елчĕк шкулĕн хастарĕсем

***«Эпĕ Атăл хĕрринчи Криуш ялĕнче пурăнатăп. Шкула сăрт çинче ларакан Елчĕке çӳретĕп. Лăпкă, ăшă кунсенче киле çуран утмалли те пулкалать. Ун пек чухне тавралăха сăнаса пыма юрататăп.***

***Мĕн каласси, шутсăр илемлĕ вырăнта пурăнатăп эпĕ. Кĕнер кати патĕнчен иртсен асфальт çул анаталла каять, вара ума тӳпе тĕсĕпе йăлтăртатакан кăн-кăвак Атăл тухса выртать. Куçпа пăхса ытарма çук илем ал лаппи çинчи пек курăнать. Сулахай енчи Чар ту сăрчĕ çинче – сип-симĕс хырлăх, юнашар – вата юмансем. Çул хĕррипе вара яла çитиччен – нумай çул ӳсекен курăк лаптăкĕсем. Сылтăм енче – çамрăк хурăн вăрманĕ. Тĕлĕнмелле, çак хурăнсем никам лартмасăрах шăтса тухрĕç. Халĕ кунта чăн-чăн вăрманлăх пулса кайрĕ.***

***Çак илеме çырса кăтартмасăр чун чăтмасть. Тăван кĕтесе мухтаса сăвă хыççăн сăвă хайлас килет», – тесе çырать 9-мĕш класра вĕренекен Татьяна Плотникова. Мĕнех, унпа эпир килĕшетпĕр.***

***Куславкка районĕнчи Елчĕк вăтам шкулĕ районта пур кăтартупа та яланах малтисен йышĕнче пулнă, кăçал вара пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ. Шкул Чăваш Республикин вĕренӳ тытăмне тĕрлĕ çĕнĕлĕх кĕртессипе вăй хурать, унсăр пуçне аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе вунă çул ытла тачă çыхăнура ĕçлет.***

***Шкулта пире чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Надежда Ивановна Морозова тĕл пулчĕ. Ырă сунса малалла иртме сĕнчĕ.***

## Тăван чĕлхене шкултах юратма вĕренер

Урок вăхăчĕ пулнă май эпир тӳрех 8-мĕш класа кайрăмăр. Хаçатăн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа панă хыççăн ачасем çав тери хĕпĕртерĕç, савăнăçне пытараймасăр уççăн калаçрĕç, тĕрлĕ ыйту парса кăсăкланчĕç. «Эпир те «Ешĕл хунав» журнал кăларатпăр. Ăна хамăрах калăплатпăр, материалне те хамăрах çыратпăр», – тесе пĕр-пĕрне пӳлсе калаçрĕç вĕсем. Çавăн пекех вĕренекенсем «Тантăш» хаçат редакцине те сĕнӳсем пачĕç. Чăваш халăхĕн пултаруллă та хастар çамрăкĕсем, спортсменĕсемпе юрăçисем çинчен ытларах пĕлес килнине пĕлтерчĕç.

Надежда Ивановна каласа панă тăрăх – ачасем чăваш чĕлхипе литературине питĕ тăрăшса вĕренеççĕ. Тусĕсен çитĕнĕвне кура ыттисем хăйсен пĕлӳ шайне ӳстерме ăнтăлаççĕ. Вĕсен тăрăшулăхне пулах ĕнтĕ 2001-мĕш çултанпа шкулта «Ешĕл хунав» литература журналĕ тухса тăрать. Ертӳçи – Надежда Ивановна Морозова. Журналта ачасем тăван тăрăхра çуралса ӳснĕ поэтсемпе писательсен пурнăç çулĕпе паллаштараççĕ. Тепĕр чухне хăйне май шырав ĕçĕ те ирттереççĕ. Çав çыравçă кун-çулĕ çинчен калакан интереслĕ япаласем тупма тăрăшаççĕ. Унсăр пуçне хăйсем шăрçаланă сăввисене пичетлесе кăлараççĕ. Ачасем «Юнкор» хаçат пирки те манмаççĕ, ăна та вулакансем патне вăхăтра çитерме васкаççĕ. Пултаруллисем хушшинче Алина Абуковăпа тата Наталья Аванскаяна уйрăмах палăртса хăвармалла.



Иван Ефимов «Эткер» фольклор ушкăнне çӳрет. Вăл юрра-ташша питĕ ăста, музыка инструменчĕсемпе калама шутсăр кăмăллать. Нумаях пулмасть ушкăнпа Воронежа, Перьме çитсе килнĕ, тав хучĕсене тивĕçнĕ. Час-часах республикăри фестивальсене тухса çӳреççĕ. «Ӳссен эпĕ артист пулатăпах», – тесе шантарать Ваня тус-тантăшне.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнисĕр пуçне Надежда Ивановна шкул тулашĕнчи мероприятисене йĕркелемесĕр тата хутшăнмасăр юлмасть. Ачасен пултарулăх центрĕ çумĕнче иртнĕ «Сердце отдаю детям» конкурсра маттур вĕрентекен районти ăмăртура çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

Ирина Васильевна Смирнован, 3-мĕш класс ертӳçин, вĕренекенĕсем чăннипех те маттур. Вĕсем класĕпех «Тетте» журнал çырăнса илеççĕ. «Ачасем çав тери кăмăллă, савăнса, юратса пăхаççĕ журнала: кам сăрлать, кам вулать, кам вăйă вылять», – тесе пĕлтерет педагог. Кĕçĕн класри пепкисем çакăн пек тăрăшуллă вĕрентекен патĕнче пĕлӳ пухнишĕн ашшĕамăшĕ те хавас. Вĕсем те ырăпа çеç палăртаççĕ учителĕн пархатарлă ĕçне. Ирина Васильевна урокра «Тетте» журналпа усă курнисĕр пуçне тăван тавралăх илемĕпе, пуянлăхĕпе паллаштарма çывăхри вăрмана е катана кайса килеççĕ. «Эпир унта е кунта пултăмăр!» – тесе калание вара илтме питех те хавас.

**Сăн ӳкерчĕкре:** 8 класс ачисем

## Ачасем вĕренӳре çеç мар, ĕçре те маттур



Рената Дмитриевна Будкова, «Вега» хуçалăх ертӳçи, шкула кашни çул хаçат-журнал çырăнса парать: (1-4 классене – «Тетте», 5-8 классене вара – «Тантăш», 9-11 классене – «Самант»). Шкул директорĕ, Николай Иванович Чернов, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе питĕ кăмăллă. Вăл тăрăшнипех кашни çулах шкул ачисем «Вега» хуçалăха çитĕнтернĕ çимĕçе пухса кĕртме пулăшаççĕ. Ертӳçĕ те парăмра юлмасть. Ачасене шкул столовăйĕнче йӳнĕ хакпа апат çиме майсем туса парать.



Шкул директорĕ «Тантăш» хаçатпа яланах туслă пурăнни çинчен пĕлтерчĕ. Ачасене республикăра чăвашла тухакан кăларăмсемсĕр хăварма юраманни çинчен тĕплĕн чарăнчĕ. Хаçат ĕçтешĕсене тата та тăрăшуллăрах ĕçлеме ырă сунчĕ. Редакци те шкул ертӳçине, педагогсен коллективне, ачасене тĕл пулăва йĕркелеме май туса панишĕн тав сăмахĕ калать.

*Алексей ТОРГОВЦЕВ (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

# Компьютер тĕнчин сиенĕ тата лайăх енĕ

Шупашкар районĕнчи Ишек вăтам шкулĕнче темиçе çул ĕнтĕ çамрăк çыравçăсен кружокĕ ĕçлет. Унта çӳрекенсем районти тата республикăри пичет кăларăмĕсемпе паллашаççĕ, тĕрлĕ жанрсемпе – заметкăран пуçласа интервью таранах – материал çырма тăрăшаççĕ. Çамрăк çыравçă Екатерина Никифорова вĕрентекенсемпе вĕренекенсенчен «Тантăш» валли илнĕ интервьюпа паллаштарар туссене.



Сăмах хастар Таньăна.

– Нумаях пулмасть компьютер пирĕншĕн тĕлĕнтермĕш пекехчĕ. Халĕ вара вăл кашни çемьерех пур темелле, – çакăн пек шухăшпа хускатрăмăр калаçăва пуçламăш классене вĕрентекен Екатерина Ивановна Григорьевăпа. – Çемьере компьютер илесси пирки те чи малтан ашшĕ-амăшĕ мар, ачисем сăмах хускатаççĕ. Çавăнпа та аслисен унăн сиенĕ çинчен те пĕлсе тăмалла.

**– Екатерина Ивановна, эсир халĕ пĕрремĕшсене вĕрентетĕр, ачасем компьютера алла илесси мĕнле пырать?**

– Пурнăç çав тери хăвăрт улшăнать, çĕнĕрен те çĕнĕ технологисем çиçĕмле хăвăртлăхпа кĕрсе пыраççĕ. Ача компьютер технологине иртерех алла илни лайăхрах. Кунсăр пуçне тата информаци тĕнчи вĕçĕмсĕр ӳссе пынă вăхăтра кирлине тупма, тĕрĕс хак пама, ăнлантарма тата усă курма та хăнăхас пулать-çке.

**– Компьютер ачана ăс-тăн енчен хăвăртрах аталанма пулăшать тени тĕрĕсех апла?**

– Хамăн вĕренекенсене илес пулсан, çакна çирĕплетсех калама пултаратăп. Пирĕн класри ачасем пурте тенĕ пекех компьютер мĕнне питĕ лайăх чухлаççĕ: хулари тантăшĕсенчен пĕрре те кая мар. Вăл пулăшнипех хăвăрт вулама, шутлама, карттăсемпе ĕçлеме хăнăхаççĕ, вĕсен шухăшлавĕ, пĕтĕмлетӳ тума хăнăхасси аталанать. Эпĕ вĕрентекен ӳсĕмри ачасем вăйă евĕрлĕ йĕркеленĕ программăсене ытларах кăмăллаççĕ, вĕсем мĕн курнине лайăхрах ас туса юлаççĕ, шухăшлавĕ те аталанать.

***Тепĕр респондент – 8 класра вĕренекен Анна Степанова.***

**– Аня, эсĕ хăçантанпа компьютерпа усă куратăн?**

– Пуçламăш класра вĕреннĕ чухнех аттепе анне пире компьютер илсе панăччĕ. Малтан вăйăсемпе вăхăта ирттереттĕмĕр. Халĕ ун пекех вылямастăп, Дима шăллăм вара вĕсемшĕн каççах каfive.

**– Шăллу мĕншĕн вăйăсенчен уйрăлаймасть-ши? Мĕнле шутлатăн?**

– Кам пĕлет, тен, вăл, ырăсла калашле – игроман. Вăйă илĕртĕвне парăнтараймасть, çавăн евĕрлĕ «чир» пуль ĕнтĕ.

**– Уроксене хатĕрленме те чăрмантарать пуль «вăйă чирĕ»?**

– Эпĕ те çапла шухăшлатăп. Шăллăм 7-мĕш класра вĕренет, кăçал манпа та, атте-аннепе те сахалрах калаçнă пек туйăнать. Тепĕр чухне вăл кунĕ-кунĕпе компьютер вăййисемпе вăхăта ирттерет, урок хатĕрленме те манса каять, вĕçĕм аса илтермелле.

**– Екатерина Ивановна, вăтам ӳсĕмри ачасен çак «вăйă чирĕ» ан пултăр тесен мĕн тумалла-ши? – ыйтрăм вĕрентекенрен.**

– Специалистсем каланă тăрăх – ачана пилĕк çул тултариччен компьютер умне пачах лартмалла мар. 7 çула çитиччен вара монитор умĕнче 20 минутран ытла пулмалла мар, мĕншĕн тесен ку ӳсĕмрисем пуçĕпех вăйă тĕнчине кĕрсе ӳкеççĕ, вĕсенчен уйрăлаймаççĕ.

**– Екатерина Ивановна, вăйăсем те тĕрлĕрен пулаççĕ вĕт-ха?**

– Çапла, хăшĕсем ырра вĕрентеççĕ, анчах пурте мар çав. Ачасене виртуаллă сăнарсене пурнăçри сăнарсенчен уйăрма хăнăхтармалла.

– Ачан тата мĕн ас тумалла?

– Нумай вăхăт ларни сывлăхшăн сиенлĕ. Вăйăсенче ӳкерчĕксем вĕçĕмсĕр улшăнса тăни тата унти вак-тĕвексем куçа çав тери ывăнтараççĕ. Тата ялан пĕр вырăнта хускалмасăр ларни те çитĕнекен организма сиен кӳрет. Ачан мăйĕ, хул-çурăмĕ хытса ларать, пуçĕ ыратма пуçлать, çурăм шăмми кукăрлни те ырă пулăм мар.

**– Апла пулсан мĕн тумалла?**

– Ачасен компьютер умĕнче 30 минутран ытла лармалла мар, пуканăн чавса тĕренчĕкĕ (подлокотник) пулмалла мар. Кашни çур сехет хыççăн 15 минут канса илмелле. Тĕнчери хуть те мĕнле япалан та, çав шутра компьютерăн та, лайăх енĕ те, япăххи те пур. Чи кирли – виçине пĕлесси.

**– Аньăн та каламалли пур пулас?**

– Компьютерпа çыхăннă тата тепĕр ăнлансах пĕтермелле мар пулăм пирки калас килет. Пирĕн класри пĕр хĕр ача аслăрах класри пĕр арçын ачапа интернетри пĕр тетелте кунĕн-çĕрĕн çырусем, пĕлтерӳсем ярса хутшăнать, пĕр-пĕринсĕр пурăнаймаççĕ те тейĕн. Урамра тĕл пулсан вара çавсемех ахаль паллаканпа калаçнă пек е пачах сăмах хушмасăр та иртсе кайма пултараççĕ. Акă мĕнле улăштарать иккен çынна интернет тĕнчи!

**– Калаçушăн сире, Екатерина Ивановна тата сана, Аня, тавах.**

***Екатерина НИКИФОРОВА.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

# Савăнăç, сывлăх парнелерĕ...







Каникул – шкул ачишĕн чăнчăн савăнăç. Ăна пурте чăтăмсăррăн кĕтни хăех çакна çирĕплетет те. Çав кунсене ăçта, еплерех, кампа пĕрле ирттерессине малтанах палăртса хураççĕ ачасем. Аслă классен канашĕ сĕннипе 10 класра вĕренекен Таисия Глухова юнкор кĕркуннехи каникултан таврăннă ачасенчен интервью илнĕ.

**– Каникул кунĕсем килĕшрĕç-и? Мĕн асра юлчĕ?**

***Н.Куракова:***

– Хамăр Чăваш Республикин тĕп хулине кайса курас ĕмĕт пурнăçланчĕ. Шупашкарта курса çӳремелли, канмалли вырăн нумай. Константин Иванов ячĕллĕ академи драма театрĕнче пулни яланлăхах асра юлĕ. Жан Батист Мольерăн «Скупой» пьеси тăрăх лартнă «Хыт кукар» комеди мана питĕ килĕшрĕ. Тулли кăмăлпа таврăнтăм Шупашкартан.

Сăкăт шкулĕнче вĕренекенсенчен чылайăшĕ сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче канма юрататать. Çулла та, хĕлле те путевкăсем туянса (питĕ йӳнĕ вĕсем!) хула тулашĕнче вырнаçнă кану лагерĕсенче пулаççĕ хĕр ачасемпе арçын ачасем. 7 класра вĕренекен Алина Анюрова юлташĕсемпе лагерьте пĕрре çеç мар канса курнă. Хальхинче, акă, «Шурă чулсем» лагере кайса килчĕ.

**– Алина, мĕншĕн «Шурă чулсем» лагере суйласа илтĕн?**

***Алина Анюрова:***

– Сăкăт шкулĕнчен улттăн та пултăмăр эпир унта. Ку лагерь Сĕнтĕрвăрри районĕнче Атăл хĕрринче вырнаçнă. Савăнатăп унта канма май килнĕшĕн. Ултă кун хушшинче темĕн чухлĕ çĕнĕлĕх пулчĕ маншăн, çĕнĕ юлташсем тупрăм. Вăхăт питĕ усăллă иртрĕ. Сывлăха та çирĕплетме май пулчĕ, паллах. Халĕ вара çĕнĕ туссемпе çыхăну тытатпăр. Татах та кайса канас кăмăл пур.

Юлашки вăхăтра шкул ачисем хушшинче те волонтерсем пурри çинчен нумай илтме пулать. Сăкăт шкулĕнче те пур вĕсем. Кунта «Сюрприз» ушкăн йĕркеленни пилĕк çул ĕнтĕ. Хĕрсемпе каччăсем тĕрлĕ ĕç тăваççĕ тесех калас килет. 8-11 классенче вĕренекенсем хирте çĕр улми пуçтарчĕç. Акă тата, сăмахран, 11 класс каччисем «Красное Знамя» хуçалăха кĕрхи çимĕçсене тирпейлесе кĕртес ĕçсенче аванах пулăшу пачĕç.

**– Ку ырă шухăша кам та пулин сĕнчĕ-и сире, каччăсем?**

***Иван Волков:***

– Йĕтем çинчи çĕр улмие машинăсем çине тиеме, сухана кĕлете кĕртме пулăшрăмăр эпир. Кăмăл пултăр кăна, каникул кунĕсенче те вăхăт тупăнать. Паллах, эпир кунта хуçалăх ертӳçисемпе çыхăнса ĕçлерĕмĕр. Çулла та вăхăта сая яман. Кама пахча ĕçĕнче, кама стройка таврашĕнче пулăшма тăрăшнă. Спортпа та туслă эпир, ĕçлеме те ĕлкĕретпĕр, канма та вăхăт тупатпăр.

9 тата 11 класра вĕренекенсем каникул кунĕсенче те çӳрерĕç шкула: камăн вырăс чĕлхипе, камăн тата математикăпа консультацисем пулчĕç. Спорт секцийĕсене çӳрекенсем спортзала васкарĕç.

**– Арçын ачасем, спорт сире мĕнпе илĕртет?**

***Федор Кариков:***

– Футболла выляма юрататпăр эпир. Шкулта стадион пуррипе мухтанас та килет. Команда пухăнать те – выляма пуçлатпăр. Кĕркуннехи каникулта та стадион пушанмарĕ, мечĕк хыççăн чупма питĕ интереслĕ пулчĕ. Хапхана мечĕк кĕртсен вара – пушшех те! Эпир районта иртнĕ мини-футбол ăмăртăвне те хутшăнтăмăр. Виççĕмĕш вырăна çĕнсе илтĕмĕр. Савăнтăмăр уншăн.

Кам килте кинофильм пăхнă, аслисене тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçсене тума пулăшнă, кам кружокра хăйĕн пултарулăхне аталантарнă, кам спортра вăйне виçнĕ... Каникул кунĕсем хаваслă та савăнăçлă иртнĕ тесе татăклăнах калама пултаратпăр эпир.

***Таисия ГЛУХОВА.***

Патăрьел районĕ, Сăкăт шкулĕ.

**Сăн ӳкерчĕксенче:** Сăкăт шкулĕн вĕренекенĕсем.

Александр МЯСНИКОВ

# Сунарçă халапĕ

Запасри аслă прапорщик Федор Кузьмич Сергеев хăйĕн кӳршисене ухатара пулса иртнĕ мыскарасене каласа пама тытăнчĕ. Гриша пиччепе çамрăк йĕкĕт Миша тата хĕрĕхри патвар ар çын Петр Иванович ăна тимлесе итленĕ май ахăлтатса кулаççĕ.

Федор Кузьмич хăнăхнă йăлипе каллех мăйăх вĕçĕсене çавăрттарса илчĕ те халапне малалла тăсрĕ.

– Пĕррехинче шăппăн çеç пĕве еннелле утăмларăм. Сасартăк йывăç çумне пырса тăрăнтăм. Шăв-шавран хăраса шыври кăвакалсем çӳлелле вĕçсе тарчĕç. Эпĕ çухалса каймарăм, çĕр çине выртса пĕррех кĕрĕслеттертĕм пăшалпа. Тӳрех ман ура вĕçне виçĕ самăр кăвакал персе анчĕ.

– Тӳрех çавăн чухлĕ-и? Ĕненмелле мар пек, – терĕ кӳршĕ чарăлса кайнă куçĕсемпе Федор Кузьмич еннелле пăхса.

Сергеев хăйне яланах чаплă сунарçă тата пулăçă тесе шутлать, çавăнпа унăн иккĕленӳлĕхне сирес тесе сăмах çăмхине малалла тăсрĕ.

– Апла ĕненместĕн, Гриша пичче? Карелире пурăннă чухне алюмини вăлта йĕппине ăман тирмесĕрех тем чухлĕ пулă çакланатчĕ-ĕ-ĕ! Сехетре мăн витре туптулли пулатчĕ уланкăпа. Заставăра çӳрекен кушаксене çаплипех хĕрхенмесĕр пăрахса параттăмăр. Пĕр харăс виçĕ çăрттан туртса кăларни те пулнă.

Пурте хырăм тытса ахăлтатма тытăнчĕç те, Федор Кузьмич та чăтаймарĕ, мăйăхне сăтăркаласа лĕх-лĕх кулчĕ.

– Шăн пăр çине лартса яма ăста вара эсĕ, Чапай! Вĕлеретĕн култарса! – тенĕ май Петр Иванович унталла та кунталла уткалама тытăнчĕ.

– Эпĕ вара пĕррехинче... – хушша-хуппа кĕме хăтланчĕ Миша, анчах ăна Гриша пичче тӳрех пӳлсе лартрĕ.

– Аслисем калаçнă чух çăварна шыв сыпса лар-ха. Эсĕ çитменнине салтакра та пулман. Малалла сăмах çăмхине Федор Кузьмичах сӳттĕр-ха, – терĕ кулкаласа.

– Пĕррехинче диван çинче ыйха путрăм. Сасартăк йытă вĕрни, чăхсем çуйхашса кăтиклетни хăлхана кĕчĕ. Каллех картише тилĕ кĕнĕ ĕнтĕ тесе сунарçă пăшалне илме чупрăм, – терĕ Кузьмич чеен пăхкаласа.

– Пăшалĕ чăн-чăнниех-и вара? – кăсăкланчĕ çавăнтах Миша.

– Вылямалли тетте мар ĕнтĕ. Ăна мана заставăра парнеленĕччĕ. Чим, аслисене пӳлсе ан лар-ха эсĕ.

Запасри аслă прапорщик кĕсйинчен сăмса тутри кăларса тарланă çамкине шăлса илчĕ. Унтан каллех халап çапма тытăнчĕ.

– Аха, сана чăхсене епле вăрламаллине вĕрентетĕп-ха, – тесе шутларăм тарăхса. Ара, кăçал йăлт халран ячĕ ку тилĕ. Чăхсене шуйхатрĕ кăна. Ăна тытас тесе капкăн та лартса пăхрăм, усси пулмарĕ. Уйрăмах Чернушкăна шел, нумай çăмарта тăваканскере вĕлерсе хăварнă вĕт! Унран хамăрăн йытă Полкан питĕ хăратчĕ. Пĕррехинче вăл чĕпсем патне хăпарса кайнă. Чăх пĕррех сăхса илнĕ хайхискере пит-куçĕнчен. Лешĕ нăйкăшса самантрах куçран çухалнă.

– Сан Полканна пит лайăх пĕлетпĕрха, яланах кирлĕ-кирлĕ мар çĕре сăмсине чикме юратать, – мăкăртатрĕ кӳршĕ çӳçне аллипе якатнă май.

– Кладовкăна чупса кĕтĕм те ăнсăртран çу кĕленчине урайне ӳкертĕм. Çав вăхăтрах коробкăри çăнăх та тӳнсе кайрĕ. Питĕ тарăхрăм. «Ну, алла лекетĕн кĕçех. Манран ниçта та тараймăн. Сана тытсан катемпи вырăнне çакса хуратăпах. Çук-ха, арăма хитре çухава çĕлетсе парнелĕп», – терĕм хам çинчи çăнăха тасатнă май.

– Кузьмич, эсĕ сăмаха унталла та кунталла ан пăр-ха. Кала, тилле тытрăн-и? – чăтайман енне ыйту пачĕ Петр Иванович.

– Петĕр, ан кансĕрле, вĕçне çитиччен итлесе пĕтерме вăй-халу çук-им санăн? Сунарçă пăшалне алла илсе авăрларăм та вылях-чĕрлĕх картишне чупса тухрăм. Ак чăх вити алăкне урапа тапса уçса шалалла вирхĕнтĕм. Манран шикленсе пӳлме урлă темле тискер чĕр чун сиксе каçрĕ. Эпĕ вара пĕр тăхтамасăр пăшалтан икĕ хутчен кĕрĕслеттертĕм. Сĕрĕме пула нимĕн те курмастăп. Сасă кĕрлевĕ-пе хăлха та хупланса ларчĕ.

– Контузи пулчĕ ахăртнех, çапла-и? – кăсăкланчĕ Мишка.

– Ну, каларăн та вара! Ак хăвна кĕçех салтака илсе кайĕç. Курăн вара унти пурнăçа. Пеме вĕренмелли вырăнта сана хăлху урлă та шаплаттарĕç-ха. Уйрăмах артиллерире! – тесе асăрхаттарчĕ ăна Федор Кузьмич.

– Михайло, ан пăшăрхан, çар санран чăн-чăн çын тăвĕ, – йĕкĕте юлташла çурăмĕнчен лăпкаса ăс пачĕ Петр Иванович.

– Танкистсемпе артиллеристсем вутçулăмран хăрамаççĕ. Санăн ав, Федор Кузьмич пек пограничник пулмалла. Унта ытлашши сасă кĕрлевĕ çук, анчах та питĕ ăслă пулмалла, – сăмах хушасăр ниепле те чăтаймарĕ Гриша пичче.

– Тĕрĕс сăмах. Ку юрĕ-ха, эсир мана итлесе пĕтерĕр-ха. Пăшалтан пенĕ хыççăн тăратăп çапла анраса. Шăп çак вăхăтра аллисемпе хăлаçланса, тем кăшкăрашса мăшăрăм Вера чупса çитрĕ. «Лектертĕм пулмалла, чуп, çухавана виçсе пăх. Шăп сан валли ахăртнех», – терĕм ăна курнăран ыйхăран вăраннă пек пулса. «Кама лектертĕн?» – куçне чарсах ыйтрĕ хайхискер. «Кама мар, мĕне темелле санăн. Ав, пӳлме хыçĕнче тилĕ выртать», – терĕм хĕпĕртесе. Арăм тӳрех унталла чупрĕ, эпĕ ун хыççăн. Тимлерех пăхрăмăр та – кĕтесре Полкан лара парать. Чĕтреме ернĕскер йĕри-тавралла хăравçă мулкачла тинкерет, – терĕ Федор Кузьмич мăйăхне сăтăркаласа.

– Э-э-э! Апла иккен. Сан йытту ухмаха тухнă евĕр урамра урлă-пирлĕ чупкаланине куртăм çав, ахальтен мар иккен. Унăн та хăйне евĕр контузи пулнă иккен. Мĕскĕне шел,– лĕх-лĕх кулчĕ Гриша пичче.

– Вара... Витере тилĕ пулнă-и-ха? – шăппăн çеç ыйтма хăю çитерчĕ Миша сартăках.

– Кам пĕлет ĕнтĕ. Пулнă та пуль, тен, пулман та, – хул пуççийĕсене сиктерсе хурав пачĕ халапçă.

– Ну, Кузьмич, чаплă сунарçă вара эсĕ! Куçна йытă та тилĕ евĕр курăнна иккен. Çапах та ним айăпсăр хам-хама шел, сана пула вилесле хăранă вăл, – терĕ Петр Иванович.

Шăп çак вăхăтра хупах хушшинчен пылчăкпа вараланнă, куршанак çаклатнă йытă сиксе тухрĕ.

– Полкан, Полкан... – чĕнчĕç йытта пурте хавассăн.

Хам-хам хӳрине пăлтăртаттарса чупса çитрĕ вĕсем патне. Ак Федор Кузьмич умне пырса темиçе хутчен вĕрсе илчĕ.

– Полканчик, хырăму выçрĕ-и? Атя, яшкапа... çук-ха, какайпа... çавăн чухне чăх витине тытнипе хăналăп, – хавассăн çеç пуплерĕ Федор Кузьмич юратнă тусĕпе.

– Атя, Кузьмич, хăвăн «тиллӳне»... хăв пăшалтан персе ӳкернин ашĕпе тăрантар, – кăмăлтан ахăлтатрĕ Петр Иванович.

Ун хыççăн пурте куççуль тухиччен кулчĕç.



# Ăслай чулне çĕклеетпĕр-и?



Журналистика факультечĕн пĕр пӳлĕмĕнче телефон шăнкăртатрĕ. Трубкăна илĕртӳллĕ те ырă кăмăллă кафедра заведующийĕ Ольга Ростиславовна тытрĕ. Калаçу вĕçленсен вăл кафедра ĕçченне:

– Людмила, пирĕн пата пĕр ватă çын ĕçпе çитнĕ. Ман шутпа вăл мăнукĕсемшĕн тăрăшать. Кунта вĕренме кĕмелли условисемпе паллашма килнĕ ахăртнех. Тархасшăн, кайса калаç унпа, мĕн кирлине тĕплĕн ăнлантар. Йывăрлăхсем сиксе тухсан кунта илсе кил.

Вăхăт нумай та иртмерĕ кафедрăна Людмилăпа хайхи ар çын кĕрсе те тăчĕç.

– Ырă кун, Ольга Ростиславовна. Сирĕнпе питĕ хавас паллашма. Мана Федор Кузьмич Сергеев тесе чĕнеççĕ, запасри аслă прапорщик, – паллаштарчĕ хăйĕнпе аякри хăна.

– Кăмăллă, кăмăллă. Иртĕр, малалла, – кафедра заведующийĕ ăшшăн калаçнă май хăнана тенкел çине ларма сĕнчĕ.

– Тавах, – кăмăллăн калаçрĕ ветеран. – Ольга Ростиславовна, тархасшăн, ан тĕлĕнĕр манран. Эп мĕн-ха... вĕренӳ пирки. Редакторсен курсĕ пирки ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Ватла киле литературăпа кăсăкланма пуçларăм. Службăри аса илӳсене хут çине шăрçалатăп ав, хамах редакцилетĕп. Пурнăçĕ питĕ кăсăклă иртрĕ çав. Тĕрлĕ мыскара та курнă. Ман хайлавсене паянхи çамрăк кăмăлласса шанатăп çапах та. Ан тив, Антун мăнукăм та службăри кунçулăм пирки кĕнекере вуласа пĕлтĕр. Анчах çырулăхпа кăшт уксахлатăп, пулсах пĕтмест.

– Вĕренме кирек хăш вăхăтра та пулать паллах, çапах та, вăрттăнлăх мар пулсан хăвăр миçе çултине каласамăр? – кăсăкланчĕ тĕлĕннĕ Ольга Ростиславовна.

– Мĕн каламаллине те пĕлместĕп ĕнтĕ.

– Эпĕ утмăл тăваттăра. Ман пирки иккĕленме кирлĕ мар, лайăх вĕренĕп. Пĕтĕм чун хавалĕпе.

– Çынсем ватлăхра та вĕренеççĕ тенине пĕрре мар илтнĕ-ха, анчах хам пурнăçра кун пеккине курман. Яшкĕрĕмпе тан ĕлкĕрсе пыма йывăртарах пулмĕ-ши Сире? Мĕнле калас та, текех çамрăк мар-çке. Людмила, тархасшăн, Федор Кузьмича чей сĕнсем. Эпĕ хутаçран пылак кучченеç кăларам-ха.

Ольга Ростиславовна самантрах хитре чашăкă тутлă канфетпа тултарса лартрĕ.

– Ку «Асамлă кайăк» конфета пирĕн тăрăхра, Шупашкарта, кăлараççĕ вĕт! Чăнах та, ăна çисен чĕлхе анса кайĕ. Мĕн тери тутлă вăл, – терĕ кăмăллăн Федор Кузьмич аллине савăт еннелле тăснă май. – Эп хам Чăваш Енрен. Ывăл патне хăнана килтĕм. Хăй вăл пограничник, ман çулах суйларĕ. Хайхискер килте тунсăхласа ларма хушмарĕ, вăхăт усăллă ирттĕр тесе куравпа музея çӳреме канаш пачĕ. Мана унăн сĕнĕвĕ пĕрре те килĕшмерĕ. Журналистсен курсне çырăнсан усăллăрах пулĕ тесе шутларăм та Сирĕн пата çитрĕм авă. Кунта пĕлӳ шайĕ пăсăк пулнине тахçанах илтнĕ-ха эпĕ. Мускав Патшалăх университечĕн картлашкисем тăрăх утса курам-ха пĕрех хутчен.

– Людмила, пирĕн çумарах вырнаçсамăр. Хăнана факультет ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарсам, – терĕ кафедра заведующийĕ ăш пиллĕн.

– Йывăрлăхран нихăçан та хăраман, – хăюллăн калаçма пуçларĕ ветеран. – Заставăра чухне хурашуррине пĕрре мар курнă. Апла пулин те нихăçан та пуç усман, шав малалла талпăннă. Литературăна яланах юратнă эпĕ. Пĕррехинче вара ман хайлав «Пограничник» журналта пичетленсе тухрĕ. Çакн хыççăн пограничниксем шӳтлесе те йĕплесе «писатель» теме тытăнчĕç.

Федор Кузьмич техĕмлĕ чее пĕр сыпкăм ĕçрĕ те шухăша кайрĕ.

***(Малалли çитес номерте).***
**АВТОР ӳкерчĕкĕсем.**

*Вырăсларан Луиза ВАСИЛЬЕВА куçарнă.*

## Альбина Майорова – çĕнтерӳçĕ




Чăваш Ен спортсменки Альбина Майорова Йокогамра (Япони) иртекен хĕрарăмсен марафонĕнче çĕнтерсе чăваш пикисем чи пултаруллисем пулнине тепĕр хутчен çирĕплетсе пачĕ. Хĕвел тухăç çĕр-шывĕнчи чупусенче мала тухнă хĕр ку хутĕнче те ăмăртăва хутшăнма чĕнсе илнĕ 13 ятлă-сумлă спортсменсенчен пĕри пулнă.

Марафон пуçламăшĕнче Альбина малта чупакансене хăваласа çитмесĕр, майĕпен чупнă. 25 çухрăм хыççăн Майорова хăвăртлăхне ӳстерлĕ те ытти спортсменсене хăйĕнчен чылай кая хăварса 2 сехет те 25 минут та 55 çеккунтра финиша çитнĕ. Ун хыççăн Азуса Нодживи – японка 3 минута яхăн юлса (2:28:47), 3-мĕш вырăна Португали хĕрĕ Джессика Аугушту (2:29:11) тухнă.

## Чăваш Республикин велосипедисчĕсем – чи хăвăрттисем

Ижевскра велосипедпа чупса Раççейре мала тухассипе чемпионат иртрĕ. Унта ар çынсен, хĕрарăмсен тата çамрăксен ушкăнĕ ăмăртнă.

Хĕрарăм командинчен Самара спортсменки Е. Гоголева 12,5 çухрăма чупса «кĕмĕле» тивĕçнĕ, Е. Гавриловăпа М. Семенова 3 тата 4-мĕш финиша çитнĕ.

Хĕр ачасенчен М. Семенова 10 çухрăмра «кĕмĕл», Е. Гаврилова 7,5 çухрăмра «бронза» илнĕ. Арçын ачасенчен С. Осипов 10 çухрăмри дистанцире «кĕмĕл» медаль тивĕçнĕ.




## Пензăран медальсемпе таврăннă



Çак кунсенче Пенза хулинчен шывра ишекенсен ăмăртăвĕнчен Шупашкарти 9-мĕш шкул вĕренекенĕсем 24 медальпе таврăннă. Унта Мускав, Саратов, Пенза облаçĕн, Пушкăрт тата Чăваш республикин шкулĕсенчен 600 ытла спортсмен хутшăннă.

Уйрăммăн ишсе пирĕн республика çамрăкĕсем 8 –«ылтăн», 7 – «кĕмĕл», тата 7 «бронза» медаль çĕнсе илнĕ. Хĕр ачасенчен 50 тата 100 метр ишессипе Арина Кошкина, Елена Давыдова, Анастасия Григорьева тата Дарья Любченко чи пултаруллисем пулса тăнă.

## Каратистсене медальсем

Иртнĕ эрнере Мускавра пĕтĕм Раççей шайĕнчи арçын ачасен хушшинче мăшăр кĕрешӳсен ăмăртăвĕ иртрĕ. Раççей Кубокне çĕнсе илме тата каратэ-сетокан дисциплинипе мала тухма 36 регион хутшăннă. Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командинче ачасемсĕр пуçне кĕрешӳ клубĕн председателĕ Д. Фомиряков тата çамрăк каратистен тĕп тренерĕ А. Астраханцев пулнă.

Шупашкарти «Будокан» кĕрешӳ клубĕнче каратэ ăсталăхне алла илессипе тăрăшакан А. Аввакумов, В. Фадеев, В. Ким тата О. Тарашкин – «бронза», 14-15 çулхисен хушшинче Н. Беловощев – «кĕмĕл», 12 çулхисенчен Р. Элган «бронза» çĕнсе илнĕ.




## Ялти çĕнĕ стадион




Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк ялĕнче «Урожай» çĕнĕ стадион уçăлни ял халăхне савăнтарчĕ.

Стадиона футбол уйĕ, чупмалли çул, хоккей вылямалли лаптăк тата 500 çын вырнаçтаракан трибуна кĕртнĕ. Мероприятие Чăваш Ен пуçлăхĕ М. Игнатьев уçрĕ. Вăл республикăра тата 10 стадиона хута ярасси, ялсенче физкультурăпа спорта аталантарасси пирки пĕлтерчĕ. Чурачăк стадионне çӳрекен спортсменсем чылай çитĕнӳ туса район ятне мала кăларма пултарĕç малашне.

## Чемпион ята тивĕçнĕ

Юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕччен Зеленоградра япăх илтекен е пачах хăлха илтмен çынсен хушшинче сĕтел çи теннисне выляссипе Раççей шайĕнчи чемпионат иртнĕ. Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тата Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервисен училищин вĕренекенĕсем хутшăннă унта.

Ушкăн турнирĕнче чăваш хĕрĕсем А. Егорова, А. Иванова тата К. Парфенова ытти спортсменсене çĕнтерсе малти вырăнсене йышăннă.

Уйрăмшарăн выляса республика пикисем финала тухнă. 19 çулти А. Егоровăпа А. Иванова çĕнтерӳçсен йышне кĕнĕ.

А. Алексеев тренер пĕлтернĕ тăрăх хастар хĕрсене хăлха илтменнисен хушшинче сĕтел çи теннисне выляссипе Раççей спорт мастерĕн ятне парас тĕллевлине пĕлтернĕ.

## Ирĕклĕ кĕрешӳре малта




Перьм хулинче 16-17 çулхи хĕрсен хушшинчи пĕтĕм Раççей шайĕнчи ирĕклĕ кĕрешӳ ăмăртăвĕ вĕçленчĕ. Унта пирĕн республикăран 8 спортсмен хутшăннă.

Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх чăваш хĕрĕсем 5 медаль – 2 «кĕмĕл», 3 «бронза» çĕнсе илнĕ. «Кĕмĕле» Шупашкарти Олимп резервисен училищинче вĕренекен Алена Игнатьевăпа Екатерина Гаврилова тивĕçнĕ. Анастасия Косаревăна, Наталья Дмитриевăна тата Надежда Красновăна «бронзăпа» наградăланă.

## «Кĕмĕл» призерсем




Çак уйăх пуçламăшĕнче Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» пăр керменĕнче хоккей выляса Раççейре мала тухассипе турнир иртнĕ.

Чăвашсен Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол – 2002» хоккей команди Саранск («Мордовия»), Нурлат («Ледок»), тата Саров («Саров») хулисен ушкăнĕсемпе тĕл пулса вылянă. «Мордовия» «Соколпа» выляса 1-мĕш вырăна тухнă.

Чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче финал тытăçăвĕнче «Ледокпа» «Саров» выляса 7:3 шутпа ăмăртăва пĕтĕмлетнĕ. Нурлат хулин ушкăнĕ «бронза» призерĕ ятне тивĕçнĕ.

Иккĕмĕш тапхăрта «Сокол» (Çĕнĕ Шупашкар) тата «Мордовия» (Саранск) тупăшса чăваш хастарĕсем вăйăа 5:4 шутпа вĕçлесе «кĕмĕл» призер пулса тăнă.

Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

# 2013 хаваслă самант

## «Чăваш алфавичĕ» сăмах каçмăш




1. Чăваш писателĕ, «Аксусем» повесть авторĕ. 2. Африкăн хĕвел анăç пайĕнче вырнаçнă çĕр-шыв. 3. Музыка станĕнчи паллă. 4. Строительство материалĕ. 5. Кăнтăрти нумай çул ӳсекен ӳсен-тăран тата унăн çимĕçĕ. 6. Пылак çĕр улми. 7. Суту-илӳ пункчĕ. 8. СССРта ăсталанă космос карапĕ-самолечĕ. 9. Сăн ӳкерчĕксен, картинăсен рамине хатĕрлемелли ятарлă планка. 10. Ӳнер тĕсĕ. 11. АПШри, Канадăри зубра аса илтерекен чĕр чун. 12. Çул çӳрев документчĕ. 13. Пысăк метеор. 14. Вырăс совет поэчĕ. 15. Паллă физик, академик, квант электроникине никĕслекенсенчен пĕри. 16. Пушкăртсен наци литературине никĕслекенĕсенчен пĕри. 17. И.Тургенев калавĕ. 18. Шĕвек тытмалли савăт. 19. Алтай крайĕнчи хула. 20. Лаша ăрачĕ. 21. Беларуçри крепость-герой. 22. Ишев меслечĕ. 23. «Счастливы вместе» телесериалти сăнар. 24. Вакун тĕнĕлĕ çинчи подшипник курупки.




1. Пулă тытмалли хатĕр. 2. Хĕç-пăшалпа усă курса çĕр-шывсем пĕр-пĕринпе хирĕçни. 3. Болгрсен чи паллă писателĕ. 4. Польшăри юхан шыв. 5. Лена юппи. 6. В.Краснов-Асли çырнă «Вутра» романри сăнар. 7. Поезд пайĕ. 8. М.Лермонтовăн вĕçлемен романĕ. 9. Хальхи вăхăтри паллă Раççей хĕрарăм юрăçи. 10. Л.Агаковăн «Пĕрре, çуркунне...» повеçĕнчи сăнар. 11. Бадминтон вăййин хатĕрĕ. 12. Сасăлакансен ытларахăшĕ çирĕплетнĕ йышăну. 13. Шĕвек тытмалли савăт. 14. Самолет маневрĕнчи элемент. 15. М.Трубина çырнă калав. 16. Чăвашла тухнă паллă роман. 17. Килти выльăх-чĕрлĕх. 18. Шут хисепĕ. 19. Пушă вăхăта усăллă ирттермелли май. 20. Юмахсенчи шыври сăнар. 21. Калта йышши чĕр чун. 22. Шыв юхтармалли хатĕр. 23. Н.Ефремовăн «Пуян Карук» драминчи сăнар. 24. Чăваш ăсчахĕ, литературовечĕ.

## Пуç ватмăш




### 1-мĕш пуç ватмăш

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш алфавитĕнчи 3-мĕш сас палли. 2. Чăваш мифологийĕнчи усал вăй. 3. Строительство материалĕ. 4. Чăваш чĕлхи тĕпчевçи. 5. Титан руди. 6. Г.Харлампьевăн «Илемлĕ ир» повеçĕнчи сăнар. 7. Вырăс çул çӳревçи, Тверь купси.

Хуравсене тĕрĕс çырсан «А» стрелка майлă Чăвашран тухнă паллă синолог, Китай тĕпчевçин «Ă» стрелка майлă И.Яковлева чăваш алфавичĕ тума пулăшнă хăйĕн студенчĕн хушамачĕсем вуланĕç.

### 2-мĕш пуç ватмăш

***Çак ӳкерчĕкпех усă курмалла.***

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш алфавитĕнчи сас палли. 2. Юпитер спутникĕ. 3. Амак, сывăмарлăх. 4. Грецири хула тата порт. 5. В.Иванов-Паймен çырнă «Кĕпер» романĕнчи сăнар. 6. Румынсен писателĕ, «Интервал» роман авторĕ. 7. Çур çĕр Америкăри юхан шыв тата ун çинчи шыв сикки.

Хуравсем тĕрĕс çырсан «А» стрелка майлă паллă пахчаçă, сад ăсти, селекционер хушамачĕ, «Ă» стрелка майлă çур çĕрти çырла ячĕ вуланĕç.

### 3-мĕш пуç ватмăш

***Çак ӳкерчĕкпех усă курмалла.***

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш алфавитĕнчи сас палли. 2. Çуралнă ача паракан сасă. 3. Европăри юхан шыв. 4. Ĕçме-çиме. 5. Çар çыннин е строителĕн пуçне тăхăнмалли. 6. Совет Союзĕнчи патшалăх вăрттăнлăхне пресăра йĕркелесе, тĕрĕслесе тăнă организаци. 7. Польшăн тĕп хули.

Хуравсене тĕрĕс çырсан «А» стрелка майлă чăвашсен паллă композиторĕн хушамачĕ, «Ă» стрелка майлă вара музыка хайлавĕн ячĕ вуланĕç.

## «Музыка» сăмах каçмăш вăчăри



1. «Шывармань», «Нарспи» – музыка хайлавĕсен пĕр пĕтĕмĕшле ячĕ. 2. Ф.Васильев çырнă музыкăллă комеди. 3. Клавишăлла музыка инструменчĕ. 4. Музыка станĕнче усă куракан паллă. 5. Чăваш композиторĕ. 6. А.Асламас çырнă опера. 7. П.Чайковский кĕвĕленĕ опера. 8. Балетри «вĕçев». 9. Мăнаçлă юхан шыв çинчен хывнă балет. 10. Музыка е литература хайлавĕн пĕр пайĕ. 11. Итальянецсен ташши. 12. Чăвашри паллă аранжировщик. 13. Вырăс сăвăçи, чылай юрă йĕркисен авторĕ. 14. Чăвашсен вĕрсе каламалли инструменчĕ. 15. «Шывармань» операри сăнар. 16. С.Рахманинов опери. 17. В.Беллини поэми. 18. Чăваш-хĕрарăм композиторĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăнаканĕ.

## Ребус



***Çакăнта акăлчансен политика тата патшалăх деятелĕ, писателĕ Б. Дизраэли каланă çунатлă сăмахсене вулама пулать.***

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**